**Пирĕн интервью ял ҫыннисен ыйтăвĕсене туллин тивĕҫтересси пирки**

# Елена ПОТАПОВА, “Мини-маркет” магазин сутуҫи: “Суту-илӳ культури пурнăҫ шайне ӳстерессе шанатăп”

***Журналист тивĕҫĕсене пурнăҫласа районăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче, тĕрлĕ ĕҫ коллективĕсенче пулса курма тӳр килнĕ май район центрĕнчи уйрăм ҫын харпăрлăхĕнчи “МИНИ-МАРКЕТ” магазинра та пĕрре мар пулнă, кунти суту-илӳ тирпейлĕхĕпе те пахалăхĕпе тата сутуҫăсен тараватлăхĕпе паллашса чĕрере ырă йĕр хăварнă. Ҫынсем кунти ĕҫ-хĕлпе кăмăллă пулни те куҫ умĕнчех. Потребительсен прависене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна тата суту-илӳпе ҫынсен йăла ыйтăвĕсене тивĕҫтерекен, пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх ĕҫченĕсен кунне халалласа район администрацийĕн пуҫлăхĕн йышăнăвĕпе “Районти чи лайăх сутуҫă” конкурс ирттерме палăртсан, “Ступень-Муркаш” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн маларах асăннă магазинне ҫитсе курмасăр чун чăтмарĕ. Суту-илĕвĕн кунти культура ыйтăвĕсем паян ялсенче те уҫăлакан уйрăм ҫынсен харпăрлăхĕсенчи магазинсемшĕн те тĕслĕх пуласси пирки иккĕленместĕп. Калаҫăва общество директорĕ Михаил Васильевич ВАСИЛЬЕВ тата магазинта 9-мĕш ҫул сутуҫăра ĕҫлекен Елена Владимировна ПОТАПОВА пĕр шайра хутшăнни хаҫат вулакансемшĕн интереслĕ пуласса шанса тăратăп.***




**– Пĕрремĕш ыйту Елена Владимировна патне. Муркаш район администрацийĕн пуҫлăхĕн асăннă йышăнăвĕ пирки эсир мĕн шутлатăр? Вырăнлă-и вăл тата хăш енпе?**

– Вăрттăнлăх мар, паян район территорийĕнче сутуҫăсен хисепĕ 15-20 ҫул каяллахинчен палăрмаллах ӳсрĕ. Ҫакă таварсен хакне те хăех йĕркелет, ҫынсен тавар туянас суйлавне те пысăклатать. Рынок аталанăвĕ тетпĕр ҫакнашкал лару-тăрăва. Анчах пурнăҫăн ҫак аталанăвĕнче тепĕр ыйту малти рете тухса тăчĕ: суту-илӳ культури. Паян тавар туянакан ҫак ен ҫине ытларах тимлĕх уйăрса кашни сутуҫă патнех васкаса пымасть. Хăшĕсем суту-илӳ культурине пăхсах хăйсене валли куллен кĕрсе тухмалли магазинсем суйласа илчĕҫ. Кунашкал лару-тăрура бизнеса ăнăҫлă аталантарас тесен пирĕн те хамăр ĕҫри культурăна малти вырăна кăларма тивет. Эпир ҫапла тăватпăр та. Район администрацийĕн пуҫлăхĕн йышăнăвĕ суту-илӳ культурине тепĕр картлашка малалла аталантарма пулăшни пирĕншĕн куҫкĕрет. Кашни ĕҫрех культура ҫине тимлĕрех пăхма пуҫласан, общество аталанăвĕ ҫĕнĕ шая ҫĕкленесси пирки иккĕленӳ ҫук. Ку вара кашниншĕнех лайăх вĕт? Хирĕҫле хурав пулаймастех.

**– Михаил Васильевич, эсир Елена Владимировна каланипе килĕшетĕр-и тата хăвăр бизнес пирки виҫ сăмах каламăр-и? Паян эсир анлă ĕҫлени ĕнер кăна пуҫланă ĕҫ мар вĕт-ха? Ҫамрăксемшĕн те вăл хăйне евĕр урок.**

– Ҫамрăксемшĕн урок тенĕрен ҫакна калатăп: пĕрре пуҫăннă ĕҫе вĕҫне ҫитерме пултарни, хăвăнпа кӳршĕлле ĕҫлекене “таптаманни”, пĕр каланă сăмаха тытма пултарни, налук тӳлессипе ултав ҫулĕнчен пăрăнни, пĕрле ĕҫлекенсене шанни бизнесри пĕтĕмĕшле ĕҫ ăнăҫăвĕн никĕсĕ. Елена Владимировна пирĕн патăмăрта 9 ҫул ĕнтĕ сутуҫăра ĕҫлет те рынок условийĕсенчи ĕҫ дисциплинине хăнăхса ҫитрĕ, ĕҫре хăй шанчăклă пулнине тăрăшулăхĕпе ҫирĕплетрĕ. Ҫавăнпа та унăн сăмахĕсенче манăн хирĕҫлемелли ҫук, вĕренмелли вара пайтах. Сутуҫăсем-ҫке куллен халăхпа хутшăнаҫҫĕ, вĕсен шухăш-кăмăлне пĕлсе тăраҫҫĕ.

Хамăн бизнес пирки калас пулсан, вăл историе юлса пыракан совет саманинчех пуҫланнă: шăпах ҫав ҫулсенче эпĕ Чăваш Патшалăх университечĕн строительство факультетне пĕтертĕм, хуҫалăхсем хушшинчи “Моргаушская” строительство организацийĕнче 10 ҫул инженер-строительте ĕҫлесе пурнăҫ тути-масине вĕрентĕм. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш ҫулĕсен пуҫламăшĕнче рынок экономики вăй илме пуҫласан, нумайăшĕ коммерции ĕҫне кӳлĕнчĕҫ те манăн та хама ҫак ҫĕнĕлĕхре тĕрĕслесе пăхас шут ҫуралчĕ. Ҫапла вара 1995 ҫулта Шупашкарти “Ступень” фирма урлă Муркашри Йăла ҫуртĕнче апат-ҫимĕҫпе промышленноҫ таварĕсен магазине уҫрăмăр. Вăл вăхăтра уйрăм предпринимательсем магазинсемех уҫни пулман. Ҫапла вара ку енпе эпир районта малтисен ретĕнче пултăмăр. Пĕрремĕш кунранах мăшăрăм Елена Петровна ăнланса пулăшса пыни хăват пачĕ, ҫĕнĕ шухăшсем ҫуратрĕ. Ĕҫ кайрĕ. 1996 ҫулта Шупашкарти фирмăран уйрăлса хамăра тĕллĕн “Ступень-Муркаш” чикĕллĕ яваплăхлă общество йĕркелерĕмĕр.

**– Куратăп, сирĕн бизнесăн стажĕ 10 ҫултан иртрĕ. Ҫак тапхăрта эсир миҫе ҫĕнĕ ĕҫ вырăнĕ уҫрăр-ха? Халăха ĕҫпе тивĕҫтересси рынок хутшăнăвĕсенче те кун йĕркинче ҫивĕч тăракан ыйту.**

– Сирĕн ыйтăвăр ҫине паракан хурав кирек хăш предпринимателĕнне те ĕҫ ăнăҫăвне ҫирĕплетекен кăтарту тесе шутлатăп. Сирĕн ыйтăвăр ҫине ҫывăхарах хуравласа ҫакна калам: Йăла ҫуртĕнче магазин уҫсан икĕ сутуҫăна ĕҫе илтĕмĕр. Вăл вăхăтра налуксем нумай тĕрлĕ пулнăран магазина таварсемпе тивĕҫтернипе пĕрлех бухгалтери ĕҫĕсене те хамах туса пыраттăм. Ҫăмăл марччĕ. Ҫавăнпах бухгалтер валли тепĕр ĕҫ вырăнĕ уҫрăмăр. Пус ҫумне пус хушни ĕҫе те анлăлатма ыйтать. Ҫапла вара 1998 ҫулта Ярапайкассипе Юнкăпуҫĕнче магазинсем уҫрăмăр. Юнкăпуҫĕнче ĕҫ кайманнипе унти магазинăн ĕмĕрĕ вăрăмах пулмарĕ. 2000 ҫулта район центрĕнчи автостанции ҫумĕнче ҫăкăр-булка тата апат-ҫимĕҫ продукчĕсем сутма икĕ суту-илӳ павильонĕ кун ҫути курчĕҫ. Тепĕр икĕ ҫултан Муркаш пасарĕнче “Улыбка” магазин ĕҫлеме пуҫларĕ. Хамăр ĕҫе ҫултан-ҫул ҫапла йĕркелесе пырса ҫĕнĕ ĕҫ вырăнĕсене вун тăваттăна ҫитертĕмĕр. Паян манпа пĕрле интервью паракан Елена Владимировна Потапова ҫавсенчен пĕри. Вăл пирĕн обществăра 1998 ҫултанпа вăй хурать. Ăнăҫусăр та мар. Хăй ĕҫне юратса пурнăҫланипе, тавар туянакансемпе тараватлă пулнипе, ĕҫре ҫĕнĕлĕхсем сĕннипе, кирлĕ вăхăтра хăйĕн ҫине ответлăх илме хăраманнипе, суту-илӳ культуришĕн тăрăшнипе, ĕҫрипе пĕрлех обществăлла мероприятисене те активлă хутшăннипе палăрнăран вăл юлашки ҫулсенче тăтăшах ҫулталăк пĕтĕмлетĕвĕсемпе хамăр общество парнисене тивĕҫрĕ, ытти ĕҫченсемшĕн тĕслĕх пулса тăчĕ.

**– Ĕҫ паракан кун пек чыслани паянхи пурнăҫра сайра тĕл пулакан пулăм. Хăпартлантармасть-и вăл Сире, Елена Владимировна, ҫĕнĕ шухăш-ĕмĕтсем чĕртмест-и?**

– Паллах. Йăлтах ырă калани аван-ха та, анчах вăл сăмахсем кулленхи ĕҫре татах та ответлăрах пулма чĕнеҫҫĕ. Паллă ĕнтĕ, общество аталанăвĕ пĕр эпĕ ҫеҫ ĕҫленипе пулмасть. Ҫавăнпа та паян манăн хампа пĕрле ĕҫлекен Любовь Борисовна Васильева сутуҫăна, пирĕнпе яланах юнашар тăракан Елена Петровна Васильева аслă сутуҫăна, общество ертӳҫине Михаил Васильевича хама ĕҫре яланах пулăшса пынишĕн, вăхăтра усăллă канашсем панишĕн тав тăвас килет. Хама шанни вара, чăнах та, ҫĕнĕ шухăш-ĕмĕт ҫуратать. Акă, пирĕн ҫĕршывра рынок хутшăнăвĕсем тымар ярса вăй илме пуҫлани йăлтах пирĕн куҫ умĕнче пулса иртрĕ. Ҫавăнпа та пирĕн унчченхипе хальхине танлаштарма, ҫĕнĕ пурнăҫ варкăшĕ илсе килнĕ улшăнусем ҫине пĕр вăтанмасăр пăхма, тивĕҫлĕ пĕтĕмлетӳсем тума майĕ пур. 15 ҫул каялла, рынок аталанма пуҫласанах, унччен-хи йĕркене хăнăхнă халăх вăл е ку таваршăн магазинсенче вăрăм черетре тăни паян та куҫ умĕнче. Ун пек ҫĕрте суту-илӳ культури пирки калаҫма пулать-и? Паллах ҫук. Ҫав пурнăҫра культурăшăн тунсăхланă халăх вăхăт иртнĕ май хăйсен тавар туянас ыйтăвĕсене туллин тивĕҫтерме уйрăм предпринимательсен магазинĕсене ҫул хыврĕ те. Кам ҫакна вăхăтра ăнланса илнĕ – вăл малалла ҫул хывнă та.

**– Мĕн-ха вăл Сирĕн шутпа суту-илӳ культури?**

– Кăна кашниех хăйне май ăнланать пулĕ те, анчах вăл сутуҫă тавар туянакана ăшă кăмăлпа кĕтсе илсе унăн ыйтăвĕсене вашават тивĕҫтернинче, тавар туянакана магазина кĕме кăмăллă пулнинче, паха



– “МИНИ-МАРКЕТ” сентрисем тулли пулни пĕрлехи ĕҫ ӳсĕмĕ, – тет Е. Васильева аслă сутуҫă.

тавар ассортименчĕ пысăккинче курăннине никам та хирĕҫлемĕ. Магазинра хăйĕн ыйтăвĕсене лăпкă лару-тăрура туллин тивĕҫтернĕ ҫын киле те ăшă кăмăлпа пырать, хĕрӳ ĕҫ кунĕ хыҫҫăн та савăнăҫ туйăмне ҫухатман арăмĕпе е упăшкипе мăшăрĕ те, ачисем те кăмăллă юлаҫҫĕ, тулли сĕтел хушшине ларса пĕрле малашлăх планĕсене сӳтсе яваҫҫĕ, пурнăҫ ҫулĕ ҫине шанчăклăн пăхаҫҫĕ. Магазинран таврăнакан ҫыннăн кăмăл ăшши ҫемьери климата йĕркелесе ярать, ыранхи кунпа шанчăклă пурăнма хавхалантарать. Ахальлĕн... Ҫыннăн тепĕр чух ĕҫре те кăмăл пăсăлни пулать те киле таврăннă чух ҫула май магазина кĕрсен те ҫав пăсăк ӳссен, вăл киле мĕнле кăмăлпа ҫитет-ха? Ҫакăн хыҫҫăн йĕркесĕрлĕх вăй илнинчен мĕн тĕлĕнмелли пур? Ҫемье обществăн пуҫламăш сыпăкĕ тенĕрен, вăл тĕреклĕ пулсан ҫеҫ ҫĕршыв аталанăвĕ авăра каймĕ, экономика ҫирĕпленĕ, пуласлăх уҫăмлă пулĕ.



МИНИСТЕРСТВО ФИЗИЧЕСКОЙ КУЛЬТУРЫ И СПОРТА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ДИПЛОМ

НАГРАЖДАЕТСЯ

Игрок команды Потапова Елена

за III место

в первенстве Чувашской Республики по волейболу, посвящённое 60-летию Великой Победы

среди женских команд сельских районов.

10 апреля 2005 года.

П. Елена архивĕнче ĕҫре тата спортра ҫĕнсе илнĕ Хисеп грамотисемпе дипломсем пĕрре мар.

**– Елена Владимировна, эсир “Ступень-Муркаш” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра чылай ĕҫлекен сутуҫă. Пĕлес килет, магазинри ассортимента кам тĕрĕслесе тăрать-ха?**

– Пĕр-пĕрне шанни бизнесра пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине маларахах каларăмăр ĕнтĕ. Ку ыйтура эпир Михаил Васильевичпа тахҫанах пĕр сăмах тупнă. Халăхпа тăтăш ҫыхăнура пулнăран вĕсем мĕн ыйтни пирĕн куҫ умĕнче. Халăх ыйтать – тавар пулать, ыйтман тавар пирки калаҫу та ҫук. Ку вăл рынок экономикин йĕрки. Михаил Васильевич шаннипе тавар кӳрсе паракансемпе те хамăрах ĕҫлетпĕр: мĕн чуль кирлĕ – заказ паратпăр, кӳрсе килсен йышăнса юлатпăр.

**– Михаил Васильевич, районăн рынок тапхăрĕнчи аталанăвне епле хаклайратăр? Ҫĕнĕлĕхсене пурнăҫа кĕртме мĕнле сĕнӳ парайратăр?**

– Пытарма ҫук, район рынок тапхăрĕнче ҫĕнĕлĕхсенчен юлса пырса хăйĕн сăнне вараламарĕ. Хамăр суту-илӳпе




ĕҫленĕрен районăн кашни ӳсĕмнех сăнаса тăратпăр, ăна кура хамăр ĕҫсене йĕркелетпĕр. Районти суту-илĕве илсен, Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсем иккĕшĕ те республикăра ҫеҫ мар, Раҫҫейре те курăмлă вырăнсем йышăнни, рынок экономики аталаннăҫемĕн унччен палаткăсенче сутă тунă предпринимательсен пĕр пайĕ пирĕн тĕслĕхе малалла тăсса уйрăм магазинсем уҫни савăнтарать кăна. Вĕсем халĕ Муркашра ҫеҫ мар, ытти ялсенче те пĕрре-иккĕ ҫеҫ мар. Ҫакă ҫĕнĕ тĕллевсем ҫуратать. Магазин уҫас тĕллевлĕ предпринимательсем нумайăшĕ ăна мĕнле уҫассипе, унти ĕҫсене йĕркелессипе, налуксем тӳлессипе вĕренме пирĕн пата килеҫҫĕ те эпир кашнинех хамăр опытпа паллаштаратпăр. Район аталанăвĕ пирĕн ҫине мĕнле витĕм кӳни пирки сăмах тапратсан, ҫакна каламалла: район пĕр вырăнта тăмасть пулсан, пире валли те сутă тумалли продукци алă айĕнчех пулать. Апла пулсан тавар туянакан патне тин ҫеҫ хатĕрленĕ продукци ытларах ҫитет. Эпир, тĕслĕхрен, ытларах хамăр районта кăларнă продукцие сутма тăрăшатпăр. Кунта Мăн Сĕнтĕрти ҫăкăр завочĕпе тачă ĕҫленине уйрăммăн палăртас килет. Вĕсен продукцине пĕлтĕр кăна пĕр миллион тенкĕлĕхе яхăн сутрăмăр. Ҫак ҫыхăну малашне те ҫухалмасса шанатăп.

– Ҫĕнĕлĕхсене пурнăҫа кĕртме мĕнле сĕнӳ парайратăр терĕр те, Михаил Васильевич сăмахĕсем ҫумне хушса калас шухăш ҫуралчĕ. Район рынок аталанăвĕнче ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ чикĕсем ҫĕнсе пыни, пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсем, райпосен коллективĕсем пĕр-пĕрин ĕҫ опычĕпе вырăна тухса паллашни куҫ умĕнче. Ҫакă пĕрин ҫитменлĕхне тепри тăвасран хӳтĕлет. Кунашкал вĕренӳсене уйрăм предпринимательсем тытакан магазинсен ĕҫ коллективĕсем хушшинче йĕркелесен те ытлашши пулмĕччĕ.

**– Лайăх сĕнӳ. Сирĕн ĕҫ коллективĕ сывă пурнăҫ йĕркине тытнине пĕлетĕп. Хăвăр ҫак ҫул ҫинче пулнăранахтăр Сирĕн магазина кĕрсен те ытти ҫĕрти пек сăра ĕҫсе тăракан ҫук...**

– Обществăлла вырăнта сăра ĕҫме юрать-и вара? Сывă пурнăҫшăн кĕрешесси пĕр-ик ҫын ĕҫĕ мар. Кунта обществăн сиенлĕ йĕркесене хирĕҫ пĕр ҫын пек кар! тăмалла. Эпир вара ҫакăнта хамăр тӳпене хывас тетпĕр те. Ĕҫ коллективĕнче вăл пирĕн ҫирĕп йĕрке. Ҫак тĕллевпе эпир яланах спорт мероприятийĕсене хутшăнатпăр, хĕлле те, ҫулла та ушкăнпа канма тухса ҫӳретпĕр. Кунта та продавецсенчен Елена Владимировнана уйрăммăн палăртас килет. Вăл пирĕн ĕҫри активистка ҫеҫ мар, тăрăшуллă спортсменка та. Йĕлтĕрпе ăмăртассипе, волейболла выляссипе тата ытти спорт тĕсĕсемпе вăл районта ҫеҫ мар, республикăри ăмăртусене те тăтăшах хутшăнать, призлă вырăнсем ҫĕнсе илет. Кунта унăн мăшăрĕ Радислав Иосифович та спортран аякра тăманнине каласа хăвармалла. Вăл ачасемпе ҫамрăксен Муркашри спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ, нумай спорт ăмăртăвĕсен ҫĕнтерӳҫи тата призерĕ. Вĕсен 7 ҫулхи ывăлĕ Майкл та спортран айккинче тăмасть. Ҫемьери ҫакнашкал килĕшӳре ĕҫре яваплăхпа палăракан Елена Владимировнан тӳпи те пĕчĕк марри палăрать.

**Автортан**

***Интервью илнĕ тĕле Муркаш ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ Николай Иванович НИКИТИН пырса кĕчĕ. Пирĕн тĕллевпе паллашсан вăл та М. Васильевпа унăн “Мини-маркет” магазинĕ тата унта ĕҫлекен Елена Владимировна Потапова сутуҫă пирки ыррине калаймасăр чăтаймарĕ:***

***– “Мини-маркет” район центрĕнче уйрăм предпринимательсен аллинчи ăнăҫлă аталанса пыракан магазинĕсенчен пĕри. Унăн хуҫи тата “Ступень-Муркаш” чикĕллĕ яваплăхлă общество директорĕ Михаил Васильевич Васильев район центрне тирпей-илем кĕртес ĕҫе, спорт мероприятийĕсене спонсорла пулăшма яланах хавас. Тавах ăна уншăн. Уйрăм тав сăмахĕ манăн ăна спорт ăмăртăвĕсене ял тăрăхĕшĕн, районшăн хăйĕн патĕнче сутуҫăра ĕҫлекен Елена Владимировна Потаповăна хутшăнма ҫул уҫса панăшăн, чарманшăн калас килет. Лена вара, чăнах та, ĕҫри пекех, спортра та никам питне те хĕретмест. Ытларахчĕ пире ҫавнашкал ĕҫченсем.***

**– Елена Владимировна, мĕн сĕннĕ пулăттăр эсир хăвăр ĕҫпе тата спорт тĕлĕшпе?**

– Йăлтах пирĕнтен килес пулсан... Суту-илĕве анлăлатма магазина ҫĕнетсе улăштармалла. Рынок ҫавна ыйтать. Спорт тесен, ачасене ачаллах унта активлăрах явăҫтармалла. Мĕн акатăн – ҫав шăтать.

**– Паҫăрах ыйтас килет-ха: Лена сĕннĕрен эсир, Михаил Васильевич, мĕн пурнăҫа кĕртрĕр те халĕ ӳкĕнместĕр?**

– Пĕр тĕслĕх ҫеҫ каласа кăтартам. Икĕ ҫул каялла Лена тавар ассортиментне тытса пыма тавар кӳрсе паракансемпе сутуҫăсене хăйсене тӳрремĕн ĕҫлеттерме сĕнчĕ. Ҫиччĕ виҫсе пăхнă хыҫҫăн ăна йышăнтăмăр. Пĕлтĕрхи ҫул кăтартăвĕсем унăн усси пысăк пулнине кăтартрĕҫ те. Ҫак ҫулпа кайса пирĕн ĕҫ те ҫăмăлланчĕ, вĕсен шанăҫĕ те пысăкланчĕ.

**– Николай Иванович эсир спонсорла пулăшуран та айккинче тăманни пирки каларĕ. Ҫак сăмахсене ҫывăхарах ăнлантарса парсамăр.**

– Тĕрĕсех палăртрĕ вăл, спорта пулăшассине эпир нихăҫан та иккĕмĕш вырăна хăварман: сывă ҫын кăна ирĕккĕн сывлайрать, ҫĕнĕлĕхсене пурнăҫа кĕртсе экономикăна малалла ярайрать. Кунпа пĕрлех инвалидсене пулăшасси, ыркăмăллăх марафонĕсене хутшăнасси, Ярапайкассинчи Культура ҫуртĕнче хĕрарăмсене ҫурхи пирвайхи уявпа саламласси, Ватă ҫынсен кунĕнче тата Ҫĕнтерӳ кунĕнче ветерансемпе вăрҫă участникĕсене, тыл ĕҫченĕсене саламласси пирĕн кун йĕркинчен тухмасть.

**Анатолий БЕЛОВ калаҫнă.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**